28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
21
ЫТЛАРИКУН
161(6912) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕнче

ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ СССР Госпланне Наркоматсемпе тата союзлă республикăсемпе пĕрле çапла тума хушнă:

А) СССР халăх хуçалăхне 1946—1950 çулсенче юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли пилĕкçуллăх плана,

Б) Чугун çул транспортне 1946—1950 çулсенче юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли пилĕкçуллăх плана туса хатĕрлесе, ВКП(б) Центральный Комитечĕпе СССР Совнаркомне тăратмалла.

Пилĕкçуллăх планра ССР Союзĕн вăрçă вăхăтĕнче нимĕçсем оккупациленĕ районĕсен халăх хуçалăхне пĕтĕмĕшпех юсаса ура çине тăратассине, халăх хуçалăхне вăрçă хыççăн урăхлатса çĕнетессине тата ССР Союзĕн мĕнпур районĕсене малалла аталантарассине палăртса хумалла. Çав плана пурнăçа кĕртсен, СССР халăх хуçалăхĕ вăрçăччен хинчен чылай вăйлăрах пулмалла.

Генералиссимус Чан Кай-ши телеграмми

Унăн Превосходительствине Генералиссимуса И. В. Сталина

Çапса аркатнипе хаçсăрланнă Япони агрессорĕ пĕр сăмахсăрах парăнчĕ.

Китай халăхĕ тата Китай çарĕ ячĕпе Сире, çавăн пекех тата ССР Союзĕн халăхне Çарне чи хĕрӳллĕ салам яратăп.

Совет Союзĕ вăрçа татăклăн хутшăнни тискер тăшмана аркатса тăкас ĕçе хăвăртлатма май панă тĕп сăлтавсенчен пĕри пулса тăрать. Союзниксем тĕнĕл çĕршывĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ тапхăрта Эсир ăслăн та татăклăн тытса пынă политика, çавăн пекех тата ССР Союзĕн çарĕсем кĕрешӳре тунă чаплă ĕçсем пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе савăнтарчĕç.

Мĕнпур союзниксем кĕрешӳре таччăн пĕрлешсе ĕçлени, вĕсем иксĕлми вăй хурса кĕрешни кăна тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерме май пачĕ. Паянтан вара Пĕрлешнĕ Нацисем малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме пĕтĕм вăйĕсене хурса тăрăшĕç. Çĕнĕ тĕнче туса хурас ĕçе çывăх вăхăтрах вĕçлессине халĕ ĕнтĕ çирĕп шанса тăма пулать.

Эпĕ çакна пĕтĕм чун-чĕререн ĕненсе тăратăп: пирĕн икĕ çĕршыв хушшинчи кунран-кун вăйланса пыракан çирĕп туслăх Хĕвелтухăç Азири мирĕн никĕсне яланлăхах хывать кăна мар, çакăнпа пĕрлех вăл пĕтĕм тĕнчере çĕнĕ йĕрке туса хумалли чи паха май та пулса тăрать.

ЦЗЯН ЧЖУН-ЧЖЕН.

ЧУНЦИН, 1945 çулхи августăн 15-мĕшĕ.

Китай Республикин Нациллĕ Правительствин Президентне

Генералиссимуса Цзян Чжун-чжена

Сирĕн туслă саламăршăн тата Эсир Япони агрессорне çапса аркатас ĕçре Совет Союзĕ йышăннă вырăна пысăка хурса хакланăшăн тав тăватăп. Германипе пĕрле пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçласа янă Япони парăнни çакна кăтартса парать: агрессорсене хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те çапса аркатнишĕн этемлĕх союзниксен кĕрешӳри туслăхне тав тума тивĕçлĕ. Çак çĕнтерӳ вăл пĕтĕм тĕнче историйĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать, вăл мĕнпур этемлĕхĕн прогрессиллĕ аталанăвĕнче аслă маяк пулса тăрать.

Çакна шанса тăратăп: пирĕн çĕршывсем ирĕклĕхе юратакан мĕнпур нацисемпе пĕрле туслăн тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени пĕтĕмĕшлĕ миршĕн тата халăхсем чечекленсе пырас ĕçшĕн пулĕç.

И. СТАЛИН.

МУСКАВ, 1945 çулхи августăн 18-мĕшĕ.

Великобритани королĕн телеграмми

Унăн Превосходительствине Калинин господина, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председательне

МУСКАВ

Тăшмана татăклăнах çĕнтернĕ çак историллĕ тапхăрта, Председатель господин, эпĕ хам та тата манăн мĕнпур халăх та хамăрăн хĕвелтухăçĕнчи тата хĕвеланăçĕнчи аслă союзниксем çинчен шухăшлаççĕ. Йывăр кĕрешӳ тата татти-сыпписĕр жертвăсем кӳни, унăн çав тери пысăк пайне совет халăхĕ мухтавлăн тӳссе ирттерчĕ, ирĕке юратакан халăхсене агрессин хура вăйĕсене тĕппипех парăнтарма май панине эпир нихăçан та иккеленмен. Анчах та çак тапхăрăн аслă пĕлтерĕшĕ çакăн çинче çеç мар. Вăрçă вăхăтĕнче тăшмана тĕппипех çĕнтернинчен пысăкрах ĕç те тунă: пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессин çирĕп никĕсне хывнă. Çак никĕс ĕнтĕ, вăрçă вăхăтĕнчи пекех, мирлĕ вăхăтра та питĕ паха фактор пулса тăрать. Çак хĕçпăшал тĕлĕшĕнчи юлташлăх ирĕклĕх тăшманĕсене пĕтерсе тăкма пултарчĕ пулсан, ăна малалла илсе пыни вара пирĕн халăхсем кĕрешнĕ идеалсем çухалас çуккине тата вĕсемшĕн тунă жертвăсем ахаль пулманнине кăтартса парать. Эпĕ Сире, Председатель господин, çак аслă событи ячĕпе саламласа, паттăр совет салтакĕсене, морякĕсене тата гражданĕсене Британи халăхĕсем хавасланнине тата вĕсен туслă шухăш-кăмăлĕсене каласа пама ыйтатăп.

ГЕОРГ.

ЛОНДОН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн М. И. Калининăн телеграмми

Унăн Величествине VI-мĕш Георга, Великобритани Корольне

Япони правительстви парăнасси çинчен тунă заявлени ячĕпе кăмăллăн саламланăшăн Сирĕн Величествăна тав тăватăп.

Британи çарĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче тата Лăпкă океан çинче çав тери пысăк çĕнтерӳсем тунă ятпа Сире пĕтĕм чун-чĕререн тав тунине йышăнма ыйтатăп. Пирĕн халăхсем хушшинче вăрçă çулĕсенче хывнă туслăх никĕсĕ вăрçă хыççăнхи вăхăтсенче те Великобританипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха малалла аталантарса çирĕплетмелли çирĕп никĕс пулса тăрассине шансах тăратăп.

М. КАЛИНИН.

МУСКАВ.

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Генералиссимус Сталин патне янă телеграмма

Польша правительствин делегацийĕ Мускавран таврăннă хыççăн Сире пире хаваслăн йышăннăшăн тата Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи государство чикки çинчен договор тăвасси тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес ыйту тĕлĕшпе Польшăпа ССР Союзĕн правительстви хушшинчи килĕшӳ тăвасси çав тери туслăн пулса иртнĕшĕн чун-чĕререн тав тăватă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах тата çакна пĕлтеретĕп: Мускаври килĕшӳве паян Министрсен Совечĕ пĕр шутлă пулса пĕтĕмпех ырларĕ. Вăл Польшăпа ССР Союзĕ хушшинчи чикке татăклăнах палăртса хунин историллĕ пахалăхне уйрăмах хыттăн асăрхаттарчĕ. Çак чикĕ кӳршĕллĕ пурăнакан славян халăхĕсен чи паха интересĕсене килĕштерет тата вĕсем ĕмĕр-ĕмĕр туслăн пурăнассин никĕсĕ пулса тăрать.

Министрсен Совечĕ тата çавăн пекех вăрçă сиенĕсемшĕн тӳлеттерессин çинчен Польшăпа СССР хушшинчи килĕшӳве тунă чухне Совет Союзĕ Польша çине туслăн тата тӳрĕ кăмăлпа пăхнине тав туса палăртать.

БЕРУТ.

1945 çулхи августăн 18-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне гварди майорне И. Н. Кожедуба виççĕмĕш хут „Ылттăн Сăлтăр“ медалĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешӳ фронтĕнче командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата Совет Союзĕн Геройĕ ятне пама тивĕçлĕ геройла ĕçсем тунăшăн Совет Союзĕн Геройне гварди майорне Иван Никитович Кожедуба виççĕмĕш хут «Ылттăн Сăлтăр» медалĕпе наградăлас. Унăн геройла ĕçĕсене ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас тесе, бронзăран унăн кĕлеткине тăвас тата кирлĕ пек çырса Мускав хулинче постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи августăн 18-мĕшĕ.

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господинпа Польша Республикин Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин Мускавран тухса кайни

Августăн 17-мĕшĕнче Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин, Польша Республикин Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин, Премьер-министрăн Заместителĕ Çĕрĕç Министрĕ С. Миколайчик господин тата вĕсемпе килнĕ ытти çынсем Мускавран тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра вĕсене çаксем ăсатса янă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ арми генералĕ Н. А. Булганин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзĕн Польшăри Посолĕ В. З. Лебедев, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Д. Крутиков, Мускав Совет Председателĕн Заместителĕ М. А. Яснов, Мускав хулин коменданчĕ генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ А. Н. Абрамов, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин тата ыттисем те.

Çавăн пекех тата каякансене çаксем ăсатса янă: Польша посольствинче ĕçлекенсем Польша ĕçĕсен Вăхăтлăх Поверенăйĕпе В. Матвин господинпа пĕрле, Китай Республикин Посолĕ Фу Бин-чан господин, Греци Посолĕ А. Политис господин, Нидерланди Посолĕ барон Ван Бругель Дуглас, Бельги Посолĕ Э. Ле Гэ господин, Турци Республикин Посолĕ С. Сарпер господин, Югослави Посолĕ В. Попович господин, Итали Посолĕ П. Кварони господин, Швеци Посланникĕ С. Седерблюм господин, Дани Посланникĕ Т. Дессинг господин, Исланди Ĕçĕсен Вăхăтлăх повереннăйĕ П. Торотейнссон господин, Великобритани посольствин советникĕ Ф. Роберт господин, Франци Республики посольствин советникĕ П. Шарпантье господин, Иран посольствин советникĕ А. Этесами господин, Чехословаки Республики посольствин советникĕ И. Кашпарек господин тата ыттисем те.

Ăсатса янă чухне хисеплĕ хурал тăратнă, Польша республикипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Аэродрома Польша тата Совет ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Çав кунах Мускавран Польша Республикин Промышленность Министрĕ Г. Минц господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ З. Модзелевский господин, Промышленность Министрĕн Заместителĕ Г. Ружаньский господин тухса кайнă.

Белорусси вокзалĕнче вĕсене çаксем ăсатса янă: Совет Союзĕн Польшăри посолĕ В. З. Лебедев, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ А. Н. Абрамов, Совет Союзĕн Польшăри Суту-илӳ представителĕ Лошаков, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин, çавăн пекех тата Польша Республикин посольствинче ĕçлекенсем Польша ĕçĕсен Вăхăтлăх Поверенăйĕпе В. Матвин господинпа пĕрле.

Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин ТАСС корреспондентне каласа пани

Кăçалхи августăн 16-мĕшĕнче ССР Союзĕпе Польша правительствисем Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ çинчен тунă Договора тата Германи оккупацийĕ кӳнĕ сиенсемшĕн тӳлеттерес тĕлĕшпе тунă Килĕшӳве алă пуснă май, Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ Э. Осубка-Моравский господин ТАСС представительне çапла каланă:

«Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи чикĕ çинчен каласса таталса тин кăна алă пуснă Договор пирĕн халăхсемшĕн историллĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав Договорта темиçе çĕршер çул хушши хирĕçӳсемпе кĕрешӳ кăларса пынă чикĕ ыйтăвне кăна мар тĕрĕс те ăслăн татса панă, çакăнпа пĕрлех тата цирĕн кӳршĕллĕ халăхсем пĕр-пĕринпе тăванла туслăн пĕрлешсе ĕçлемелли çирĕп никĕсе хывнă.

Германи хĕвелтухăçнелле тапăнса килес ĕмĕтпе Ягаллон Польшине малти позиципе кăларса тăратнă, Польша хăйĕн вăйĕсемпе Германи хĕссе килнине хирĕç тăма пултарайман. Вăл, Грюнвальд примерĕ тăрăх, Германи агрессине хирĕç мĕнпур славян халăхĕсене пĕрле пухса тăратас вырăнне, хĕвелтухăçĕнче çĕрсем шыраса, тĕрĕс мар çулпа кайнă.

Çав политикăллă пысăк йăнăш славян халăхĕсене питех те пысăк сиен кӳчĕ тата пуринчен малтан Польшăна хăйне çав тери хаяррăн пырса çапрĕ. Çавна пула Польша Европăри хăватлă государствăн вырăнне тата хĕвелтухăçĕнчи чи пуян çĕрсене—Польша государстви çуралса тухнă çĕрсене çухатнă кăна мар, çав çĕрсенчи миллионшар поляк çыннине Германи чуралăхне кĕртсе ӳкернĕ тата нумай çынна вĕлерсе пĕтернĕ е нимĕçлентернĕ кăна мар, Польша çавăн пекех тата часах хăйĕн нациллĕ никама пăхăнманлăхне те çухатнă.

Государство аслă та хăватлă пуласси унта пурăнакан национальноçсем, хăйсем нации тĕлĕшпе кирлĕ пек аталанма май тупайманскерсем, хутăшса кайнинчен килмест тесе калакан шухăш тĕрĕс мар шухăш пулни 1939 çулхи сентябрьчченхи Польша тĕслĕхĕнчен çав тери хурланмалла тухса тăчĕ. Хăйĕн нациллĕ никама пăхăнманлăхне çухатнине пула çав тери нумай хĕнхур тӳснĕ Польша халăхĕ, хăйĕн нациллĕ никама пăхăнманлăхне пуринчен çӳлерех хурса хаклаканскер, украинецсен, белоруссен е литовецсен никама пăхăнманлăхне хирĕç пихăçан та тăман тата тăма та пултарайман. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕнĕ чикке тунă хыççăн çав халăхсем кашни хăй тĕллĕн пĕтĕмĕшпех пĕрлешсе пĕтĕçрĕç. Польша халăхĕ çав халăхсене хăйсен ирĕклĕхĕпе тата нациллĕ никама пăхăнманлăхĕпе туллин усă курса пурăнма пĕтĕм чун-чĕререн ырă сунать.

Пирĕн халăхсем хушшинчи çĕнĕ те лайăх тата çирĕп чикĕсем çинчен тунă договор, пĕр-пĕрне юратса та туслăн тунăскер, çавăн пекех тата поляксемпе еврей çыннисене—Польшăна, украинецсемпе белоруссене хăйсен республикисене куçарасси çинчен тунă килĕшӳ те, Польшăпа ССР Союзĕ хушшинчи туслăх тата пĕр-пĕрне пулăшасси, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă пакт та,—çаксем пурте ĕнтĕ пирĕн пĕрлехи хăрушсăрлăхăн тата мирлĕ аталанăвăн гранит пек çирĕп никĕсĕ, пирĕн халăхсем телейлĕ пурăнассин шанчăкĕ пулса тăрассĕ.

Чикĕ çинчен тунă договор пирĕншĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл пирĕн хĕвелтухăçĕнчи чикĕсен ыйтăвĕпе таччăн сыхăнса тăрать. Çав чикĕсене эпир историре пулнă виçепех туянтăмăр. Пирĕн хĕвеланăçĕнчи чикĕсем халĕ ĕнтĕ Нисса тата Одер шывĕсем тăрăх, Балтика тинĕсĕн хĕррипе тăсăлса выртаççĕ. Çакă ĕнтĕ вăл фашистла Германие Хĕрлĕ Çарпа союзниксен çарĕсем çапса аркатнине пула тата союзлă государствăсем, уйрăмăнах ССР Союзĕ, пирĕн çине ырă кăмăлпа пăхнине пула çавăн пек пулса тăрать.

Польшăн хĕвеланăçĕнчи мĕнпур авалхи çĕрĕсене Польша аллине каялла таварса парас ыйтăва татса панă çĕрте Генералиссимус Сталин, Комиссар Молотов тата ССР Союзĕн Правительстви нумай вăй хурса пулăшни поляк çыннисен ăс-тăнĕнче хĕвелтухăçĕнчи çĕрсене сухатнине пула çуралакан кирек мĕнле туйăмсене те яланлăхах сирсе ярать. Çавă нимĕнпе те хакласа çитерме çук питех те пысăк пулăшушăн поляксем ĕмĕр-ĕмĕр тав туса тăрĕç. Совет Союзĕ пулăшнипе кăна аслă та вăйлă Польшăна çĕклесе ура çине тăратма май пулчĕ.

Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çĕнĕ чикĕ çинчен тунă договор тата пирĕн халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусем,—çаксем ĕнтĕ Польша историйĕн тата Польшăн тулашри политикин çĕнĕ аслă страницин пуçламĕшĕ пулса тăрать. Польшăн тулашри политики малашне пурнăç хушакан тĕрĕс çулпа пырĕ.

Чикĕсене тĕрĕс палăртса хуни, мĕнпур славян халăхĕсем пĕр-пĕринпе ĕмĕр-ĕмĕр туслăн пурăнни тата пĕр-пĕрне пулăшни,—çакă вăл çав халăхсемшĕн телейлĕн пурăнса аталанмалли май кăна мар, Европăри çирĕп мир шанчăкĕ те пулса тăрать.

Сывă пултăр мĕнпур славян халăхĕсем хушшинчи тăванла туслăх!

Сывă пултăр Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусенче пулса иртнĕ историллĕ паха çаврăну—Польшăн никама пăхăнманлăхĕпе хăвачĕн шанчăкĕ, империалистла тата агрессиллĕ Германи умĕнче чăн-чăн хăрушсăрлăх тупма май панă шанчăк!» (ТАСС).

ЯПОНИ ЗАХВАТЧИКĔСЕН ТИСКЕР ĔÇĔСЕНЕ КĂТАРТАКАН ВЫСТАВКА

ХАБАРОВСК, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта выставка уçăлнă. Выставка Япони интервенчĕсем 1918—22 çулсенче Инçет-Хĕвелтухăçĕнче тунă пусăр ĕçсене кăтартса парать. Фотоӳкерчĕксем Амур облаçĕнчи Ивановка ялĕнче японецсем ишĕлтерсе антарнă е çунтарса янă çуртсене кăтартаççĕ. Японецсем хуласемпе ялсенчи мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнине кăтартакан фотоӳкерчĕксем те нумай.

Тепĕр тĕлте пысăк картина çакăнса тăрать. Ку картина японецсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи партизансен руководительне халăх геройне Сергей Лазона паровоз кăмакинче тискеррĕн çунтарса янине кăтартать.

Выставкăна курма халăх питĕ нумай пырать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Маньчжурире Японин Квантун çарĕсем фронтăн пысăк пайĕнче хирĕç тăма пăрахнă та тыткăна парăнма пуçланă. Пирĕн çарсем фронтăн çав участокĕсенче Япони çарĕсене хирĕç вăрçма пăрахнă, вĕсем Квантун çарĕсен парăнакан чаçĕсемпе соединенийĕсене тыткăна илсе пыраççĕ.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ çарĕсем ВЭЙХЭ, ЯНЬЦЗИ хулисене йышăннă. Августăн 19-мĕшĕнче фронт çарĕсене японецсен 55 пин салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-МĔШ ФРОНТ çарĕсем МЭРГЭНЬ, ЛУНЧЖЭНЬ, САНЬСИН хулисене йышăннă. Августăн 19-мĕшĕнче фронт çарĕсене японецсен 23 пин салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем ЖЭХЭ (ЧЕНДЭ), ЧЖАН-У, СИНЬМИНЬ, ЛЯОЮАНЬ, ЦИЦИКАР хулисене йышăннă, МУКДЕН, ЧАНЧУНЬ (СИНЦЗИН) хулисене пырса кĕмелли çулсем çине тухнă. Августăн 19-мĕшĕнче фронт çарĕсене японецсен 20 пин салтакĕпе офицерĕ ытла тыткăна парăннă.

Пирĕн авиацин десант ушкăнĕсем ХАРБИН, ГИРИН, ЧАНЧУНЬ (СИНЦЗИН), МУКДЕН хулисене аннă, вĕсем—çав хуласенчи японецсен гарнизонĕсем парăнма хатĕр, пирĕн çарсем пырасса кĕтсе тăраççĕ, тесе пĕлтереççĕ.

Квантун çарĕсен парăнакан чаçĕсемпе соединенийĕсене йышăнасси малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

АВГУСТĂН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем Маньчжурире хăйсене кăтартса панă енпелле малалла куçса пынă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ çарĕсем ЧЖУХЭ, ЭМУ, ДУНЬХУА, ГИРИН хулисене йышăнса илнĕ.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-МĔШ ФРОНТ çарĕсем МУЛАНЬ, ТУНХЭ, ХАРБИН хулисене йышăнса илнĕ. САХАЛИН утравĕн кăнтăр пайĕнче Япони çарĕсем хирĕç тăма пăрахнă та пирĕн çарсене тыткăна парăнма пуçланă.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем МУКДЕН, ЧАНЧУНЬ хулисене йышăнса илнĕ.

Квантун çарĕн тыткăна парăннă чаçĕсемпе соединенийĕсене йышăнас ĕç малалла пынă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕнче

Макартур генерал çумĕнче Совет çарĕсен представителĕ пулма Деревянко генерал-лейтенанта уйăрнă. Вăл çак кунсенче Манилăна Макартур генералăн штабне çитет.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставне çирĕплетнĕ

1945 çулхи августăн 20-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1945 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче Сан-Францискăра (США-ра) алă пуснă Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставне çирĕплетнĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культура тата искусство работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Юлашки. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 160-мĕш номерĕнче.

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

28. Михаил Гаврилович Ярзаева — заводри токаре.

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Борис Гаврилович Бурашникова — МТС трактористне.
2. Василий Алексеевич Бурашникова—Сталин ячĕпе тăракан артельсен союзĕн председательне.
3. Григорий Васильевич Волкова — эрех заводĕнчи слесаре.
4. Вера Абрамовна Казамбаевăна—МТС трактористкине.
5. Иван Димитриевич Каменецкие—çу çапакан заводри токаре.
6. Сергей Павлович Ладура—эрех заводĕн директор ĕçĕсене туса пыракана.
7. Татьяна Михайловна Михайловăна—«Великан» колхоз председательне.
8. Василий Михайлович Попова—Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне.
9. Наталия Алексеевна Шальновăна — Сталин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрикинчи цех заведующине.
10. Михаил Васильевич Шмелева — райçĕрĕç пайĕн заведующине.

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Яков Семенович Албутова — МТС трактористне.
2. Алексей Константинович Афанасьева —МТС трактористне.
3. Яков Егорович Егорова—«Ново-Ищеряково» колхоз председательне.
4. Михаил Митрофанович Корнина — «Осоавиахим» колхозри тимĕрçе.
5. Константин Ксенофонтович Мартынова—Сталин ячĕпе тăракан колхозри старши конюха.
6. Павел Владимирович Щипцова—райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономне.
7. Мария Игнатьевна Яковлевăна — «Трактор» колхозри уйхирĕç бригадин бригадирне.

ТĂВАЙ РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

1. Прокопий Григорьевич Григорьева — «Пламя» колхоз председательне.
2. Анна Ивановна Карзаковăна—МТС трактористкине.
3. Мария Николаевна Николаевăна — Киров ячĕпе тăракан колхозри сысна пăхакана.
4. Агриппина Петровна Петровăна — «Пламя» колхозри уйхирĕç бригадин бригадирне.
5. Анастасия Степановна Степановăна —Чапаев ячĕпе тăракан колхозри старши конюха.
6. Анисия Степановна Степановăна — райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникне.
7. Осип Филиппович Севена—«Комсомолец» колхоз председательне.
8. Екатерина Николаевна Табаковăна—МТС трактористкине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июлĕн 8-мĕшĕ.

МАРФА ЛЫСАК КОЛХОЗНИЦА ПĔР КУН ХУШШИНЧЕ 8400 КĔЛТЕ ÇЫХНА

КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Меджибожски районри Партин XVIII-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозници Марфа Лысак тырпул пухса кĕртес ĕçре питĕ паллă çĕнĕ рекорд тунă. Хăйне пулăшакан виçĕ çынпа пĕрле вăл кун каçиччен 8400 кĕлте çыхса, çĕмел хывса лартнă. Çапла вара вăл Запорожьери паллă колхозница Ульяна Сабокарь тата Каменец-Подольск районĕнчи Киров ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи звеньевой Евгения Яцук тунă çитĕнӳсенчен иртсе кайнă.

Евгения Яцук хăйĕн икĕ тантăшĕпе пĕрле кун каçиччен 6000 кĕлте çыхнă. Çапла вара вăл кĕлте çыхакансем хушшинчи ăмăртăва пуçарса яраканĕн Ульяна Сабокарьăн рекордĕнчен иртсе кайнă.

Çыхăсем хатĕрлесе тата вĕсене шывпа сапса, Марфа Лысак хăйне пулăшакансемпе пĕрле ирхине ирех уя тухнă. Анна Нетяга тата Анна Лысак колхозницăсем çулнă тулла купаласа пынă, Марфа Лысак кĕлте çыхнă, Гарпина Цесар çĕмел хывса пынă.

Ĕç кал-кал кайнă. Хĕрарăмсем хаваслăн ĕçленĕ. Кăнтăрлахи апат тĕлне Марфа Лысак 4000 кĕлте çыхнă. Чи шăрăх вăхăтра колхозницăсем каннă та, кайран çĕнĕ вăйпа ĕçлеме тытăннă. Ĕçлессе вĕсем тĕттĕмчченех ĕçленĕ. Каçхине вĕсем тырпул пухнă лаптăка виççе пăхнă. Вара çакă паларнă: 9,5 гектар çинчи тырпула пухса, Марфа Лысак 8400 кĕлте çыхнă.

Ытти колхозницăсем те Марфа Лысак пек ĕçлеме пуçлаççĕ. Вĕсем ялхуçалăх артелĕн хирĕсенче кун каçиччен çулнă пĕтĕм тырра çыхса çĕмелсене хывма ĕлкĕрсе пыраççĕ.

ЯЛХУÇАЛĂХĔ ВАЛЛИ КВАЛИФИКАЦИЛЛĔ РАБОТНИКСЕМ ХАТĔРЛЕССИ

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пĕр çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕсем кăçал çĕнĕрен 57 шкул уçать. Халĕ ун пеккисем 426 шкул ĕçлессĕ. Октябрь уйăхĕнче çав шкулсенче малтанхи хут вĕрентсе каларассĕ. Çавăн чухне пурĕ 35 000 çын ытла—полеводсем, животноводсем, садоводсем, ветеринарин кĕçĕн фельдшерĕсем, счетоводсем тата ялхуçалăхĕн ытти специальноçĕсемпе ĕçлекен работниксем вĕренсе тухаççĕ.

Ялхуçалăх шкулĕсенче ноябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ. Çав шкулсене 14 çул тултарнă тата унтан аслăраххисем колхозниксене, МТС работникĕсене илеççĕ. Пĕлӳ тĕлĕшпе çав шкулсене кĕрекенсем вăтам шкулăн çиччĕмĕш классĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле. Вĕренекенсене ялхуçалăх техникумĕн 1-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсене панă чухлĕ стипенди параççĕ. (ТАСС).

Авăн çапас ĕçе хăвăртлатар, хатĕрлев пунктне пĕр чарăнмасăр тырă леçер!

Кĕрхи тырăсене вăхăтра та лайăх акса хăварар!

Чкаловски район ыраш вырса пĕтернĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Августăн 17-мĕшĕ тĕлне районри пур колхозсем те ыраш вырса пĕтерсе çуртырисем вырма тытăнчĕç. Паянхи кун тĕлне 2175 гектара яхăн çуртырри вырнă.

«Красный Октябрь» колхозра (председателĕ Булатов юлташ) кĕрхи тырăсемпе çурхи тырăсене пĕтĕмпех вырса пĕтернĕ. Çак колхозра мĕнпур ĕçе уйрăм сдельщинăпа тунă. Алăпа вырнипе пĕрлех çавасемпе çулнă тата икĕ жнейкăпа вырнă. Жнейкăпа кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнмасăр вырнă, çавна май кунта кашни жнейкăпах талăкра 8—10 гектара çити вырнă.

«Гвардеец» колхоз районри пысăк колхозсенчен пĕри. Колхоз председателĕ Баранов юлташ ĕçе пĕлсе организациленĕ, пур ĕçре те уйрăм сдельщинăпа, уйрăм участоксенче ĕçлеççĕ. 320 гектар ыраша 6 кун хушшинче вырса пĕтернĕ. Çак колхозри çамрăксем августăн 13-мĕшĕнчен вара яла таврăнман, кăнтăрла та, çĕрле те хирте ĕçленĕ. Вĕсем патне кунне виçĕ хутчен вĕри апат илсе пырса çитернĕ. Ача амăшĕсене тырă вырас ĕçре тухăçлăрах ĕçлеме май парас тесе колхозра ача ясли организациленĕ. Çапла вара килхуçи хĕрарăмĕсем те хиртн ĕçе ирех тухма пултарнă. Массăллă-политикăллă ĕçе хирте колхозниксем хушшинче ирттернĕ, хаçат-журналсене, çырусене хире илсе пырса панă.

Нариман ячĕпе тăракан колхозра та ĕç ăнăçлă пырать. Колхоз председателĕ Минузитдинов юлташ яланах уйра ĕçлекенсем хушшинче уйрăм сдельщинăпа ĕçлеме организацилет. Ĕç тухăçлăхĕ кунта та пысăк. Çуртырисене 60 процент ытла вырса пухнă. «РОКК» колхоз (председателĕ Арланов юлташ) 312 гектар ыраша 5 кун çурăра вырса пĕтернĕ. «Кзыл-тан» колхоз паян çуртырисене вырса пĕтерет. Молотов ячĕпе тăракан колхоз районра сортлă вăрлăх саракан колхоз пулса тăрать. Кунта тырă лайăх пиçсе çитсен тин вырма тытăнчĕç. Ĕçре социализмлă ăмăрту сарса пынипе пула, вăл ытти колхозсемпе пĕрлех вырса пĕтерчĕ. Кĕлтесене лайăх типĕтсе çĕмеле хывнă тата авăн çапас ĕç те ăнăçлă пырать.

Пур колхозсем те хĕрсех ыраш акаççĕ, паянхи куна район ыраш акмалли плана 32 процент тултарнă.

А. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ыраш акас ĕç — паян тумалли ĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи куна 3000 гектар ытла ыраш акнă. «Комбайн» колхоз ыраш акмалли плана 65 процент, «Трактор» колхоз 74 процент. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 60 процент тултарнă. «Хунав» колхозăн акмалли пурĕ те 15 гектар кăна юлнă. Малта пыракан «Трактор», «Правда», «Хунав», «Коммунар» колхозсем ыраша пĕтĕмпех машинăпа акаççĕ. Районра пĕтĕмпе 1188 гектар ретĕн-ретĕн акнă.

Çапах та район пилĕккунлăх графика пурнăçласа пыраймасть-ха. Уйрăмах «Большевик» колхоз юлса пырать. Кунта пурĕ те 87 гектар çеç акнă, плана 15 процент ытларах кăна тултарнă. Юсавлă сеялка пур çинченех кунта алăпа акаççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ те начар, ĕçе кая юлса тухаççĕ, ĕçрен ир таврăнаççĕ. Çийĕнчех сĕрессе пымаççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра (председателĕ Шарафутдинов юлташ) çĕртме пуссине иккĕмĕш хут сухаласа та пĕтермен. Çĕртме пусси таса мар. Ыраш акас ĕç кунта та вăраххăн пырать. Акма тухнăранпа 10 кун ытла иртнĕ пулсан та, пурĕ те 35 гектар кăна акнă, кунта та алăпа акаççĕ. «Оборона» колхозра вара пурĕ те 6 гектар çеç акнă.

Çак колхозсем иртнĕ çул кая юлса акнă пирки кăçал начар тухăçлă тырпул туса илчĕç. Кĕрхи калчасем юр айне ытла та имшер юлнă пирки, çуркунне вăйсăр тухрĕç. Хăшпĕр колхозсенче кĕрхи тырăсене пăсса, çуркунне çĕнĕрен акма тиврĕ. Çавна пула уйрăм колхозсем пысăк сиен курчĕç. Анчах та çак урокран ку колхозсем кирлĕ пек вывод туман-ха.

А. ПОЛЯКОВА,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

49 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ

СĔНТĔР, августăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 49 колхозра ыраш вырса пĕтернĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз, Шатракассинчи «Родина» колхоз, «Колос» колхоз, Калинин ячĕпе тăракан колхоз çуртырисене те çуррине ытла вырнă.

Кăçал тырă вырнă çĕрте кашни колхозрах уйрăм участоксем çинче ĕçлеççĕ. Çавна пула, тырă выракансем кашни кунах нормăна тултарса пыраççĕ. «Колос» колхозра машинăпа тырă выракан Г. Поляков комсомолец кашни кунах 4 гектар вырăнне 5—6 гектар вырать. «Хĕрлĕ паттăр» колхозри М. Кукушкина тырра çавапа 0,25 гектар вырăнне 0,5 гектар ытла çулать. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕ 72 çулхи А. Шутеева, çурлапа вырса, нормăна кулленех 160-шар процент тултарать. Кашни колхозрах тăкăнса юлакан пучахсене çийĕнчех пуçтараççĕ.

Кĕрхи тата çурхи тырăсене вырнипе пĕрлех, районри колхозсенче хĕрсех ыраш акаççĕ. Паянхи куна районĕпе 1750 гектар ытла, вăл шутран 1300 гектарне машинăпа акнă.

Пур колхозсем те государствăна тырă пама тытăнчĕç. «Колос», «КИМ», «Заря», «Çĕнĕ çул», «Майăн Пĕрремĕшĕ» тата ытти колхозсем государствăна тырă памалли графика тултарсах пыраççĕ.

Анчах районри машинно-тракторнăй станци колхозсене сахал пулăшать-ха. МТС-ри 9 комбайнпа пурĕ те 150 гектара яхăн кăна вырнă. МТС-ри молотилкăсемпе те колхозсенче авăн çапнă çĕрте усă курмаççĕ.

З. СЕМЕНОВ.

Çĕнĕ кĕпер турĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Алманчă ял Советне кĕрекен «12 лет Октября» колхоз 20 метр тăршшĕ çĕнĕ кĕпер туса пĕтерчĕ. Кĕпере тунă çĕрте уйрăмах Е. Борисов колхозник тăрăшса ĕçлерĕ. Халĕ Матьшу çырми урлă çĕнĕ кĕпер тăваççĕ. Унăн тăршшĕ 40 метр пулать.

Государствăна тырă парса татнă

ШĂМĂРШĂ, августăн 20-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Кăçал районри нумай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пыраççĕ. Уйрăмăнах «Новая деревня», «Заря», «Победа», «Юлташ», Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем районра пуринчен малтан ыраш вырса пĕтерчĕç. Çак колхозсен тырпул пухса кĕртес ĕçри çитĕнĕвĕ чи малтанах колхоз председателĕсем ĕçе пур колхозниксене те явăçтарнинчен тата ĕçе уйрăм сдельщинăпа тунинчен килет.

«Новая деревня» колхоз (председателĕ Отечественнăй вăрçă инвалидĕ, орденоносец Давыдов юлташ) районра пуринчен малтан ыраш вырса пĕтерчĕ. Ыраш вырнă вăхăтрах авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăнчĕ. «Новая деревня» колхоз государствăна тĕштырă памалли плана, августăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă. «Заря» колхоз (председателĕ Тимофеев юлташ) 15 кун хушшинче памалли графика 345 процент тултарнă, тĕштырă памалли плана сентябрĕн 1-мĕшĕччен тултарассишĕн кĕрешет. «Победа» колхоз (председателĕ Г. Конпов юлташ) тырă памалли графика 130 процент тултарнă. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Николаев юлташ) графика 150 процент тултарнă. Колхозниксемпе колхозницăсем йышăннă тăрăх, çак колхоз государствăна тырă памалли плана августăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма палăртнă. «Правда» колхоз та (председателĕ Осипова юлташ) тырă памалли графика 120 процент тултарнă.

Иртнĕ çулсенче юлса пынă «Юлташ» колхоз кăçал аван ĕçлет. Колхоз председателĕ А. Тимофеев юлташ колхозри пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа организациленĕ. Çавна пула çак колхоз ыраш вырса пĕтернĕ, çуртыррисене те çуррине ытла вырнă. Государствăна тырă памалли графика кашни пилĕккунлăхрах 110 процент тултарса пырать.

Анчах та районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. «Сталь» колхоз (председателĕ Хандеев), «Искра» колхоз (председателĕ Лысов) государствăна тырă памалли графика тултараймаççĕ. «Красный воин» колхоз (председателĕ Васильев юлташ) çак вăхăта çитсе те вара государствăна пĕр килограмм та тырă паман.

Çак колхозсен малта пыракан колхозсемпе танлашассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Н. ПАДИЯРОВ.



Ÿнерчĕк çинче: Чурачăк районĕнчи «Гигант» колхоз председателĕ **П. Е. Егоров** юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз районра чи малтан ыраш вырса пĕтернĕ. Халĕ çуртырри выраççĕ, ыраш акаççĕ. Колхоз государствăна тырă памалли графика тултарса пырать.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.



Ÿкерчĕк çинче: Шăмăршă районĕнчи Асанкассинчи «Юлташ» колхоз председателĕ **А. Н. Тимофеев** юлташ. Колхоз районра малтан ыраш вырса пĕтернĕ, государствăна 15 кун хушшинче тырă памалли графика 110 процент тултарнă.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Япони делегацийĕ Манилăна пынă

НЬЮ-ЙОРК, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Манилăран пĕлтернĕ тăрăх, Японин 16 представителĕ Макартур генерална канашлама пынă, делегаци пуçлăхĕ—генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ.

Официальнăй йĕркепе пĕлтерĕ хыпарпа уса курса, Ассошиэйтед пресс корреспонденчĕ çапла çырать: хăйсен чăндачĕсене катартнă хыççăн Японн представителĕсем Макартур помощникĕсемпе Японн паранасси çинчен малтанлăха сÿтсе-явма пуçланă. Малтанхи ларура Макартур пулман.

Японецсен Манилари делегацийĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Японин Манилăна пынă делегацийĕнче 8 çар офицерĕ, 6 тинĕс офицерĕ тата икĕ гражданла çын. Кавабэ генерал-лейтенант-сăр пуçне делегацие çаксем кĕреççĕ: контр-адмирал Иокуяма, генеральнăй штаб полковникĕсем Тераи тата Ямото, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин секретарĕ Юкава тата генеральнăй штаб чиновникĕ подполковник Масао.

Японн истребителĕсем Америка самолечĕсене тапанни

САН-ФРАНЦИСКО, августăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискори радио пĕлтернĕ тăрăх, августăн 18-мĕшĕнче Токио районĕнче американецсен разведка самолечĕсене Японн истребителĕсем атакăланă. Ку ĕнтĕ японецсем иккĕмĕш хут çапла хăтланни пулать. «Б-32» йышши икĕ самолета японецсен «ЗИГ» йышши 14 истребителĕ тапаннă. Американецсем пĕр фотографне вĕлернĕ, экипажăн икĕ членне амантнă.

Америкăри официальнăй çынсем японецсен ĕмĕчĕсем пирки мĕн калаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри официальнăй çынсем Японирен паракан радиопередачăсене тимлĕн сăнаса тăраççĕ. Çав передачăсенче Японн хăйĕн çар хăватне çĕнĕрен ура çине тăратма ĕмĕтленни палăрать. Хăшпĕр çар тата дипломати представителĕсем Японири радиовещани компанийĕн ют çĕршывсен отделне ертсе пыракан Оя сăмахĕ пирки уйрăмах кăмăлсăрланнă. Оя çапла каланă: Японн вăрçăра вăхăтлăха кăна аяла пулчĕ, вăл хăйĕн йăнăшĕсене тÿрлетме тивĕçлĕ. Çав йăнăшсем материальнăй ресурссем, наукăллă пĕлÿсемпе оборудовани çитменнинчен тухса тăраççĕ, тенĕ.

Америкăри официальнăй çынсем тата çакăн пирки те шухăша кайнă: Судзуки, хăй кабинечĕ отставкăна тухаччен, Японн халăхĕ хăй аяла пулнă куна нихăçан та манмĕ, тесе каланă.

Японн хăй парăнасси çинчен пĕлтернĕ хыççăн унăн самолечĕсем американецсен 3-мĕш флочĕн карапĕсене атакăлани çинчен пĕлтерни Америкăри хăшпĕр официальнăй представительсен унчченхи иккеленÿллĕ шухăшĕсене татах та ытларах вăйлăлатнă. Вĕсем Хирохито император Японин мĕнпур хĕçпăшаллă вăйĕсене парăнтарма пултараймĕ, тесе шухăшлаççĕ.

Японин тинĕс генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ хăйне-хăй вĕлернĕ

Японири Домей Цусин агентстви тинĕс министерстви пĕлтернине каласа панă. Çав пĕлтерÿ тăрăх, Японин тинĕс генеральнăй штаб начальникĕн заместителĕ Ониси вице-адмирал августăн 16-мĕшĕнче хăйне-хăй вĕлернĕ. (ТАСС).

Сун Цзы-вень Трумэнпа калаçни

ВАШИНГТОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Китай республикин премьер-министрĕ Сун Цзы-вень çак кунсенче Вашингтона çитнĕ. Августăн 18-мĕшĕнче вăл Шурă Çуртра Трумэнпа сехет çурă хушши калаçнă. Калаçăва государство секретарĕ Бирнс та хутшăннă. Пичет представителĕсем мĕн пирки калаçни çинчен ыйтнине хирĕç Сун Цзы-вень ответ пама килĕшмен. Трумэнпа калаçнă хыççăн Сун Цзы-вень финанс министрĕпе Стимсонпа калаçнă.

Болгарири халăх пухăвне суйлас умĕн

Болгари премьер-министрĕ Кимон Георгиев калани

СОФИЯ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинчи радио панă хыпар тăрăх, Болгари премьер-министрĕ Кимон Георгиев пичет представителĕсене çапла каланă:

«Июлĕн 26-мĕшĕнче эпĕ çыру илтĕм. Унта портфельсĕр министр пулнă Никола Петков суйлавсене тепĕр вăхăта куçарма, унтан вара вĕсене союзниксем контролле тăнипе ирттерме ыйтнă. Болгарин шалти пурнăçне çавăн пек тулашран хутшăнтарма хăтланнине министрсен совечĕ пĕр шухăш кăмăллăн та татăклăн сирсе пăрахса сивлерĕ. Министрсенчен пĕри те ун чухне Петковпа пĕр шухăшлă пулмарĕ.

Августăн 13-мĕшĕнче каçхине эпĕ Америкăн Союзниксен Контроль Комиссийĕ çумĕнчи политика представителĕнчен Барнсран нота илтĕм. Çав нотăра Вашингтонри правительство Болгарири суйлавсем çинчен мĕн шухăшланине каласа панă тата пирĕн мĕн тумаллине кăтартса пама пăхнă.

Тепĕр кунне, августăн 14-мĕшĕнче, ирхине эпĕ Никола Петковран, Григор Чешмеджиевран, Петко Стояновран тата вĕсен ытти хăшпĕр тусĕсенчен вĕсем регентсем патне янă çырăвăн копине илтĕм. Вĕсем çав çырура çитес суйлавсенче хăйсен кандидатурисене каялла чĕнсе илме йышăнни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем çав решенне хăйсен ячĕсене пăснă пирки йышăнтăмăр теççĕ. Çав кунах каçхине мана тепĕр çыру пачĕç. Унта Григор Чешмеджиев, Петко Стоянов, Асен Павлов тата Ангел Держанский—суйлавсене тепĕр вăхăта куçармасан, хăйсем отставкăна тухасси çинчен пĕлтереççĕ.

Правительство çав фактсене пурне те пĕрле илсе тата шалти çыхăнусене шута илсе пăхса тухрĕ. Законсем кăларакан çитес суйлавсене туса ирттересси çинчен калакан решенне министрсен совечĕ мĕнпур министрсемпе пĕрле пĕр шухăш-кăмăллăн йышăннипе тата çав решенисене хирĕç хамăр çĕршывра та, çĕршыв тулашĕнче те нимĕнле хирĕç калани те пулманнине шута илсе, правительство суйлавсем туса ирттерни çĕршывра демократиллĕ управлени тата демократиллĕ çĕнĕ йĕрке туса хума кирлĕ тесе шутлать.

Çав суйлавсем пĕтĕмĕшпех ирĕклĕн пулса иртчĕр тесе, правительство пур мерăсене те вăхăтра йышăнчĕ. Кайрантарах çав мероприятисене татах та ытларах аслăлатса вăйлатнă.

Оппозициллĕ нумай списоксене облаçсенчи судсем çирĕплетнĕ те ĕнтĕ. Нумай вырăнсенче оппозици кандидачĕсем хăйсен агитациллĕ ĕçне пуçласа янă, вĕсене çак ĕçре никам та чарса е чăрмантарса тăмасть.

Хăшпĕр çынсемпе ушкăнсем хăйсен ĕçĕсене пирĕн çĕршывăн шалти пурнăçне тулашран хутшăнтарас ĕмĕтпе туса пыраççĕ.

Суйлавсем ситиччен 10 кун юлнине тата суйлавсене тепĕр вăхăта куçарма хăтланнине шута илсе, правительство пур фактсем çинчен те болгар халăхне пĕлтерме шутларĕ. Политикăллă тата социаллă çĕнĕ йĕркене демократиллĕ тата прогрессиллĕ анлă никĕс çинче туса хурас ĕçе вăйлатас тесе, правительство Болгари халăхне Отечественнăй фронт правительстви тавра пĕтĕçсе тăма чĕнет. Пирĕн çĕршывăн шалти пурнăçне тулашран хутшăнтарма кирек мĕнле хăтланнине те правительство татăклăн сивлет. Тепĕр енчен, правительство çакна шанса тăрать: пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕве правительство тата болгар халăхĕ хăйĕн вăйне хунине, çĕршывра демократиллĕ йĕрке туса хурас тĕлĕшпе ĕçленине ирĕклĕхе юратакан халăхсем тата пуринчен малтан союзлă виçĕ аслă государство тивĕçлипе хаклĕç. Ирĕклĕхе юратакан халăхсене тата союзлă виçĕ аслă государствăна Болгарири Отечественнăй фронт правительстви пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе тăрать.

Эпир, пĕрле вăй хурса ĕçлесе, пирĕн çĕршывăн тĕрлĕ ĕçĕсенче палăракан мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерĕпĕр тесе шанса тăратпăр. Çав шанчăкпа тата çав ĕмĕтпе эпĕ мĕнпур болгари гражданĕсемпе гражданкисене августăн 26-мĕшĕнче Отечественнăй фронт кандидачĕсен спискĕшĕн сасăлама чĕнетĕп. Çакăнпа эпир Отечественнăй фронта 1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчи историлле акта çирĕплетме пулăшатăр. Çав акт пирĕн çĕршыва хăрушă катастрофăран çăлса хăварчĕ. Çакăнпа эпир çĕнĕ, ирĕклĕ те демократиллĕ Болгари валли телейлĕ пуласлăх туса парăпăр».

Бирнс каласа пани

ВАШИНГТОН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство секретарĕ Бирнс пичет представителĕсене çапла каласа панă: США-н Болгарири политика представительне США правительстви Болгарире парламент суйлавĕсене организацилениле килĕшменни çинчен каласа пама хушнă.

Грецири лару-тăру

АФИНЫ, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Грецири коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Çав заявленире коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ хăйĕн членĕсене тата компарти майлă тăракан çынсене суйлав кĕнекисене илмесĕр тăма чĕннĕ. (Çав суйлав кĕнекисене правительство туса иртерекен суйлавсенче сасăлас ĕçе хутшăнма параççĕ). Заявленире çакна палăртнă: Грецири политикăллă партисен ытларахăшĕ тата Греци халăхĕн ытларахăшĕ ыйтнине хирĕç пыракан Вулгарис правительстви суйлавсемпе плебисцита ултавлăн ирттерме хатĕрленет, тенĕ. Коммунистсен партийĕ представительсен правительствине туса хума çине тăрса ыйтать. Çакă вăл суйлавсем ирттермелли чи паха май пулса тăрать. Фашистла реакци хăй туса пыракан террора тÿрре кăларас шутпа хатĕрлекен провокаци халăхăн парăнмалла мар, тесе чĕнет компартин Центральнăй Комитечĕ.

Берлин хулинчи союзниксен комендатурин ларăве

БЕРЛИН, августăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 16-мĕшĕнче Берлин хулин союзлă тăватă комендатурин 6-мĕш ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Паркс генерал (США) председатель пулса ертсе пынă. Паркс генерал, Горбатов генерал (СССР), Лайн генерал (Англи) тата де Бошен генерал (Франци) ларура сÿтсе-явнă ыйтусем тĕлĕшпе пĕр кăмăллă пулса решенисем йышăннă. Союзниксен комендачĕсем обер-бургомистра Берлинра укçа лотерейи кăларма ирĕк панă. Çав лотерейăран кĕрекен мĕнпур тупăша Берлин хулине юсас çĕре ямалла. Лотерея билечĕсене пухса пĕтерни хыççăн, магистратăн Союзлă Комендатурăн финанс комитетне лотерея çинчен тĕплĕ отчет тăратмалла. Тепĕр лотерейăна магистрат Союзлă Комендатурăн финанс комитечĕ ирĕк панă хыççăн тин кăларма пултарать. Берлин хулинчи организацисемпе частнăй фирмăсене кивçен укçа памашкăн банкăн Берлин хулинчи кантурне 25 миллионшар рейхсмарка хывма Англи влаçĕсем панă сĕнÿ тĕлĕшпе, пĕтĕмĕшпе илсен, калаçса татăлнă. Совет командованийĕ банка маларах хывнă 25 миллион рейхсмаркăна та кивçен парас ĕçе яраççĕ.

Союзлă комендантсем, пĕтĕмĕшпе илсен, тăватă çĕршыв представителĕсенчен тăракан суд аппаратне тăвас тĕлĕшпе калаçса татăлнă. Çак судăн хулари айăплă çынсен ĕçĕсене пăхса тухмалла пулать. Право комитетне çак аппаратăн ĕçĕ çинчен положени туса хатĕрлеме хушнă. Магистрат çумĕнче союзлă кашни çĕршывран çыхăну офицерĕсем уйăрса лартас тĕлĕшпе решени йышăннă. Магистрат çумĕнчи çыхăну офицерĕсенчен аслийĕ улшăнса пымалла. Союзлă комендатурăра хăш çĕршывăн представителĕ председатель пулать, магистрат çумĕнчи çыхăнун аслă офицерĕ те çав çĕршыв представителĕх пулать.

Союзлă комендантсем обер-бургомистра нимĕç халăхне хĕçпăшал тытса пурăнма е сыхласа усрама юраманни çинчен маларах кăларнă приказа çирĕп контроль туса пыма, граждансен пур автомашинисене те регистрацилесси çинчен приказ пичетлесе кăларма, 1945 çулхи августăн 25-мĕшĕччен Берлинра пурăнакан çынсен паспорчĕсем çине уйрăм пичетсем лартса тухма, тепĕр чухне тата çĕнĕ паспортсем пама та хушнă.

Англин çĕнĕ парламентĕнче малтанхи хут сасăлани

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпар тăрăх, августăн 16-мĕшĕнче каçхине Советăн лорд-председателĕ тата общинăсен палатин лидерĕ Герберт Моррисон общинăсен палатинче çапла каланă: вăрçă вăхăтĕнчи практикăна малалла тытса пынă май общинăсен палатин уйрăм членĕсем закон проекчĕсене сÿтсе-явма тăратма пултараймаççĕ, тенĕ.

Премьер-министр пулнă Уинстон Черчилль хирĕçлесе каланă хыççăн правительство сĕнĕвне сасăлама тăратнă, çав сĕнÿшĕн 329 çын сасăланă, сĕнĕве хирĕç консерваторсен партийĕн оппозицире тăракан депутачĕсем—142 çын сасăланă.

Кай Сундстрем—Финляндин Совет Союзĕнчи посланникĕ

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Финлянди правительстви сеймăн пĕрремĕш вице-председательне Кай Сундстрема Финляндин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Хроника

СССР Верховный Совет Президиумĕ Павел Дмитриевич **Орлов** юлташа Совет Союзĕн Финляндири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашсен Государство Академи Театрĕ çумĕнчи Театр студийĕ 1945-46 вĕренÿ çулне 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет

Студире 3 çул вĕренмелле.

Студи драма артисчĕсене вĕрентсе хатĕрлет.

Студие 16 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ лайăх сывлăхлă çынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ.

1944—45 вĕренÿ çулĕнче вăтам шкултан ылтăн е кĕмĕл медальпе вĕренсе тухнисен специальность тăрăх çеç экзамен памалла. Ыттисен вара чăваш тата вырăс чĕлхипе тата литературипе вăтам шкулăн программи тăрăх экзамен памалла. Вĕренме кĕрес текенсен чăваш чĕлхипе пьеса сыпăкĕсем, юрăсем, сăвăсем, калав сыпăкĕсем, этюдсем калама вĕренмелле.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен илеççĕ. Заявленисене директор ячĕпе çак документсемпе пĕрле ямалла: автобиографи, вăтам шкула пĕтернине кăтартакан аттестат, виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), врачран сывлăх çинчен илнĕ справка, хăçан çуралнине кăтартакан справка. Документсене пурне те копийĕсене мар, хăйсене ярса памалла.

Паспорта пĕрле илсе пымалла.

Экзаменсем сентябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Вĕрентме сентябрĕн 17-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Студи студенчĕсене общежитие вырнаçтараççĕ тата стипенди параççĕ.

Заявленисене çак адреспа ямалла: гор. Чебоксары, Чувашский Государственный Академический Театр, директору студии.

Шупашкарти Электромеханика техникумне грузовой машина çинче ĕçлеме шофер кирлĕ.

Пĕччен çынна общежитие вырнаçтараççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Карла Маркса, 82.

Ĕç дисциплини çук çĕрте

СĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Хуларан тухса, эпир Сĕмĕрлепе Пăрачкав хушшинчи пысăк тракт тăрăх Мăн Улхаш еннелле пыратпăр. Кунĕ лайăх, хĕвеллĕ. Кун пек лайăх çанталăк чылайранпа пулман ĕнтĕ.

Сĕмĕрлерен тухни самай вăхăт пулать. Эпир пĕр 8—9 километр кайнă. Çак хушăра çул çинче вĕçĕ-хĕррисĕр çынсем тĕл пулса иртетпĕр. Пĕрисем корзинка, теприсем михĕ-кутамкка, виççĕмĕшĕсем витре е ытти япала çĕкленĕ те хуларан таврăнаççĕ.

— Çакăн пек хĕрÿллĕ тапхăрта мĕнлеха ерçÿллĕ çынсем тупăнма пултараççĕ? —тесе юлташа ыйту патăм.

— Вĕсене эпĕ пурне те паллатăп. Вĕсем Мăн Улхаш çыннисем, пасара кайнă ĕнтĕ,—тет манăн юлташ.

Манăн хулари пасартан таврăнакан çынсене шута илес шухăш килсе кĕчĕ. Тепĕр 8 километр кайнă хушăра, пĕр сехете яхăн вăхăтра, эпир çул çинче 67 çынна тĕл пултăмăр. Малтанхи 8—9 километр хушшинче те çавăнтан кая мар шутлама пулатчĕ. Çапла, çул тăрăх кайнă хушăра кăна 130 çын таран тĕл пултăмăр. Мăн Улхаш ял Советĕнчи колхозсене мĕн каç пуличченех пасартан çынсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе таврăнчĕç. Эх, епле шел! Ылттăн куна ахаль çухатаççĕ! Кунта уйрăмах дисциплина çуккине, ĕçе кирлĕ пек организацилеменнине курса тăратăн.

Çÿлерех çырса кăтартнă тĕслĕх тырпул пухса кĕртес хĕрÿллĕ ĕçе чылай сиен кÿрет мĕн. Ку таврари колхозсем тырпул пухса кĕртес ĕçре чăтма çук юлса пыраççĕ.

«Красноармеец» колхоз—Мăн Улхаш ялĕнчи виçĕ колхозран пĕри. Ку колхозăн кăçал ыраш 156 гектар вырса кĕртмелле, вăл шутран 57 гектар кăна вырнă. Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ тăрăх, тырă вырма куллен 278 çын тухмалла, анчах 150 çын таран çеç тухаççĕ, 128 çын хăйсен ĕçĕпе унта-кунта çÿреççĕ.

Кунта утă епле пухса кĕртнипе те интересленсе пăхма тиврĕ. Колхозăн улăх утти 112 гектар çулмалла пулнă. Вăл шутран паянхи куна 80 гектар çеç çулнă. Унтан та 50 гектарне çеç пухнă. Çапла халĕ 32 гектар çулман утă ларать. Кусемсĕр пуçне колхозниксене хăйсем валли утă çулма улăхрах валеçсе панă. Пĕрисем татти-сыпписĕр хулана çÿреççĕ, теприсем хăйсем валли утă çулаççĕ, виççĕмĕшĕсем хăйсен ĕçĕпе унта-кунта çÿреççĕ. Çавăнпа кунта тырă вырнă çĕре куллен 100 çынран ытла тухмасть. Тухаканĕсем те ирех тухмаççĕ, каçхине те часах пăрахса кĕреççĕ.

Эпир «Красноармеец» колхозра. Ирхине 6 сехет... 7 сехет... 8 сехет... «Красноармеец» колхозăн хирĕнче çаплах пĕр çын та çук-ха.

— Мĕншĕн халĕ те вырма тухмаççĕ?

— Каçхине сывлăм вăйлă ÿкнĕ, тырă йĕпе. Ăçтан выратăн? Тырă типсе çитнĕ çĕрелле тухаççĕ,—тет колхоз председателĕ Куреин юлташ. Счетовочĕ те тăрăшсах çавна çирĕплетсе калать. Сывлăм чăн та вăйлă ÿкнĕ. Анчах вăл ял хушшинче çеç вăйлăн хăратса тăрать. Тахçанах пулса çитнĕ, хăмăлĕ хуçăлма та пуçланă ыраш йĕпе мар. Çĕрле тата сывлăмра вырма шăпах та питĕ лайăх.

Уйрăм сдельщинăпа ĕçлемеççĕ. Жнейка юсавлă пулсан та, унпа усă курмаççĕ, кĕрепле ллĕ çавасемпе те çулмаççĕ.

Мăн Улхаш ялĕнчи иккĕмĕш колхоз вăл—«Çĕнтерÿ» колхоз. Унăн ыраш 180 гектар вырса пуçтармалла, вăл шутран 40 гектар çеç вырнă-ха. Кунта тырă вырма куллен 200 çын ытла тухмалла, анчах та ку таранччен 100 çынтан ытла тухни пулман. Юсавлă икĕ жнейкăпа вырмаççĕ, кĕрепле ллĕ çавасемпе усă курмаççĕ. Пĕчĕк ушкăнлă тата уйрăм сдельщина çинчен калаçмалли те çук. Унта 2 бригада. Вĕсем те хăйсен уйĕсенче уйрăм ĕçлемеççĕ. Икĕ бригадăри çынсем пĕрлех тырă выраççĕ.

«Краснофлотец» колхозра та ĕç лайăх пынипе мухтанма çук. Тырпул пухса кĕртес ĕç кунта та çÿлте асăннă сăлтавсемпех юлса пырать.

Мăн Улхаш ялĕнчи колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, тырпул пухса кĕртес ĕçе татăклăнах хăвăртлатмалла.

Е. ВОЛКОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—33, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00213 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п.